## Ҫул ҫитмен ҫамрӑксен ыйтӑвӗсемпе

# Ҫамрӑксем тӳрӗ ҫултан ан пӑрӑнччӑр

Нумаях пулмасть ҫул ҫитмен ҫамрӑксем тӗлӗшпе тата вӗсен прависене хӳтӗлессипе ӗҫлекен районти комиссин ларӑвӗ иртнӗ. Ларӑва ҫак комисси председателӗ, район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ – культура тата архив ӗҫӗсен пайӗн пуҫлӑхӗ А.Е. Андреева ертсе пынӑ. Унта ҫул ҫитмен ҫамрӑксене воспитани парассипе ҫыхӑннӑ ыйтусене пӑхса тухнӑ.

Пӗрремӗш ыйтупа 10 ял тӑрӑхӗнчи ӗҫсене пӑхса тухнӑ. Вӗсем пӗтӗмпех ҫул ҫитмен ҫамрӑксемпе, вӗсене воспитани парассипе хӑйсен тивӗҫӗсене кирлӗ пек пурнӑҫласа пыман ашшӗ-амӑшӗпе ҫыхӑннӑ.

Халӗ ҫуллахи каникул кунӗсем пыраҫҫӗ. Уйрӑм ыйтупа ҫул ҫитмен ҫамрӑксем енӗпе ӗҫлекен комиссире учетра тӑракан вӗренекенсемпе ҫул ҫитмен ҫамрӑксен ҫуллахи канӑвне епле йӗркелени пирки те сӳтсе явнӑ. Ку ыйтупа район администрацийӗн вӗрентӳ, ҫамрӑксен политики тата физкультурӑпа спорт пайӗ, районти шалти ӗҫсен пайӗ отчетсем туса панӑ. Ҫакӑ, паллӑ ӗнтӗ, пысӑк пӗлтерӗшлӗ ыйту пулса тӑрать. Чылай ҫамрӑк ҫак вӑхӑтра хӑйне ирӗклӗ туять, аслисем енчен те асӑрхаса тӑрассипе тимлӗх сахалрах.

Районти ӗҫпе тивӗҫтерекен центр та ҫул ҫитмен ҫамрӑксен ӗҫне йӗркелессинчен айккинче юлмасть. Центрӑн ертсе пыракан инспекторӗ И.Н. Димитриева ӑнлантарса панӑ тӑрӑх, ачасене ӗҫпе тивӗҫтерес енӗпе ӗҫпе тивӗҫтерекен центрпа Москакасси, Калайкасси, Чуманкасси, Сосновка тата ытти шкулсем килӗшӳсем тунӑ. Ҫак тӗллевпе 195 пин тенкӗ уйӑрса панӑ. Вӑтамран уйӑхне шкул ачисем 520 – 530 тенкӗ укҫа ӗҫлесе илеҫҫӗ. Тӳрех ҫавна каласа хӑварасшӑн. Комисси кӑнтӑр апачӗ хыҫҫӑн вырӑнсенче пулса курнӑ, Москакасси, Мӑн Сӗнтӗр, Ильинка ял тӑрӑхӗсенче пулнӑ, уйрӑмах вара учетра тӑракан ҫул ҫитмен ҫамрӑксене ӗҫпе епле тивӗҫтернин ыйтӑвӗпе ытларах интересленнӗ.

Комисси палӑртнӑ тӑрӑх, Чуманкасси ял тӑрӑхӗнче тата Чуманкасси шкулӗнче ҫемьесемпе ӗҫлессине япӑх мар йӗркеленӗ. Шкул директорӗ В.М. Васильев каласа панӑ тӑрӑх, ӗҫпе кану лагерӗ 4 сменӑпа ӗҫлет. Шкул та хӑйӗн ӗҫне-хӗлне попечительсен канашӗпе тачӑ ҫыхӑнса йӗркелесе пырать, педагогикӑпа психологи службинче вара шкулта вӗренекенсен ҫемйисенче тӑтӑшах пулать т. ыт. те.

Ларура ҫавӑн пекех районти шалти ӗҫсен пайӗ учетра тӑракан ҫул ҫитмен ҫамрӑксемпе отчетлӑ тапхӑрта мӗнле ӗҫлесе пыни пирки те итленӗ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

## Пысӑк пӗлтерӗшлӗ ыйту

### Ыйтусене ЧР Патшалӑх Канашӗн Председателӗ, «Единая Россия» партин Чӑваш Республикинчи уйрӑмӗн ертӳҫи М.А. Михайловский хуравлать

**Ыйту: Ыйтусем ҫине хуравланинче пӗринче Эсир ҫурт-йӗршӗн тата коммуналлӑ услугӑсемпе усӑ курнӑшӑн 50 процентлӑ ҫӑмӑллӑх ӗҫ ветеранӗсене те, ҫавӑн пекех вӗсен ӗҫлеме пултарайман ҫемье членӗсене те пырса тивет тесе асӑннӑччӗ. Ҫакна мӗнле нормативлӑ актпа ҫирӗплетнине уҫӑмлатаймӑр-ши?**

**А.А. ФАДЕЕВА. Ҫӗмӗрле хули.**

**Хурав:** Чӑваш Республикин 2004 ҫулхи ноябрӗн 24-мӗшӗнче йышӑннӑ «Вӑрҫӑ ҫулӗсенчи тыл ӗҫченӗсене тата ӗҫ ветеранӗсене социаллӑ пулӑшу парасси ҫинчен» Саккунӗн 1-мӗш пайӗн 6-мӗш пункчӗпе килӗшӳллӗн ҫурт-йӗршӗн тата коммуналлӑ услугӑсемпе усӑ курнӑшӑн 50 процентлӑ ҫӑмӑллӑх ӗҫ ветеранӗсене те, ҫавӑн пекех вӗсен ӗҫлеме пултарайман ҫемье членӗсене те пырса тивет, енчен те вӗсем пӗрле пурӑнаҫҫӗ пулсан.

**Хисеплӗ вулакансем! Сирӗнтен ыйтусене ҫак адреспа кӗтеҫҫӗ: 428000, Шупашкар хули, Николаев урамӗ, 4-мӗш ҫурт, «Радио ҫурчӗ». «Пысӑк пӗлтерӗшлӗ ыйту» («Важный вопрос») тесе паллӑ тумалла.**

**Аса илтеретпӗр: «Пысӑк пӗлтерӗшлӗ ыйту» передачӑна ӗҫ кунӗсенче «Раҫҫей радио» тата «Маяк» радио» хумӗсем ҫинче те итлеме пултаратӑр. Ӑна Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн депутачӗ Евгений Слепов ертсе пырать.**

## Цифрӑсен чӗлхипе: 7 уйӑх итогӗсем

# Лайӑх еннелле улшӑнусем пур пулин те...

Малтанах демографи тӗлӗшӗнчи лару-тӑрӑва илес пулсан, ҫакӑ куранать. Кӑҫал августӑн 1-мӗшӗ тӗлне районӗпе 234 ача ҫуралнӑ, иртнӗ ҫул ҫав вӑхӑтра – 215 ача. Вилекенсем 395 ҫын пулнӑ (пӗлтӗр 412).

Январь – июль уйӑхӗсенче 539509,8 пин тенкӗлӗх (385023,1 пин) продукци туса хатӗрленӗ е пӗлтӗрхипе танлаштарсан 140,1 процент. Вӑл шутра ял хуҫалӑх предприятийӗсем туса хатӗрленӗ продукци шайӗ 149590,5 пин тенкӗпе (106,6 процент), промышленность тата продукци тирпейлекен предприятисен продукцийӗн шайӗ 389919,3 пин тенкӗпе (159,4 процент) танлашать.

Уйрӑмах ӑнӑҫлӑ ӗҫлесе пыракан промышленность предприятийӗсенчен ҫаксене палӑртса хӑвармалла: «Муркашри кирпӗч завочӗ» уҫӑ акционер обществи (5,3 хут), «Сундырь-Хлеб» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество (111,8 процент), «Сеспель» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество (185 процент), «Моргауши-Хлеб» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество (135,8 процент), «Милград» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество (117,3 процент), «Сундырское» пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх муниципаллӑ унитарлӑ предприяти (112,6 процент), «Моргаушрайгаз» филиалӗ (188,6 процент), Муркаш почтамчӗ (219,8 процент). Ҫав вӑхӑтрах «Муркашри сӗт завочӗ» уҫӑ акционер обществи (96,2 процент), «Моргаушагропромхимия» уҫӑ акционер обществи (82,4 процент), «Моргаушагропромснаб» муниципаллӑ предприяти (76 процент), «Моргаушкорм» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество (83,5 процент) пӗлтӗрхинчен япӑхрах ӗҫленӗ.

2007 ҫулхи пӗтӗмӗшле тупӑш калӑпӑшӗнче вырӑнти тупӑш 29536 пин тенкӗпе (иртнӗ ҫул 18545,7 пин тенкӗ) танлашать е 159,3 процент. Ҫав вӑхӑтрах ял тӑрӑхӗсен тупӑш калапӑшӗ чакнӑ, 5192 пин тенкӗрен 4865 пин тенкӗне юлнӑ (93,7 процент).

Тӳлевлӗ пулӑшу парасси 6,2 процент ӳснӗ, 40583,2 пин тенкӗпе танлашнӑ. Пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх муниципаллӑ унитарлӑ предприяти ертсе пыракан компанийӗ, «Моргаушрайгаз» чикӗллӗ яваплӑхлӑ общество кӑтартусене ӳстернӗ пулсан, «Моргаушрайгаз» филиалӗн кӑтартӑвӗ иртнӗ ҫулхи ҫав вӑхӑтрипе танлаштарсан 80,7 процентпа кӑна танлашать.

Ваккӑн сутмалли тавар ҫаврӑнӑш калапӑшӗ 258060,8 пин тенкӗ е 136,6 процент. Икӗ райпо коллективӗ те аван ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Мӑн Сӗнтӗрсен кӑтартӑвӗ 78060 пин тенкӗ (121,8 процент), Муркашсен – 123961 пин тенкӗ (133,7 процент). Ытти предприятисем 56039,8 пин тенкӗлӗх тавар сутнӑ (174,2 процент).

Обществӑллӑ апатлану предприятийӗсем 28485,4 пин тенкӗлӗх (123,2 процент) продукци реализациленӗ. Мӑн Сӗнтӗр райповӗпе ку кӑтарту 16017 пин тенкӗпе (109,3 процент), Муркаш райповӗпе 10930 пин тенкӗпе (133,3 процент) танлашать.

Ял хуҫалӑх предприятийӗсем аш-какай туса илессине 16,9 процент ӳстернӗ, пӗтӗмпе 1630,1 тонна туса илнӗ. Хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче 88,3 тонна (107,3 процент), харпӑр хӑйсен хушма хуҫалӑхӗсенче 1907,5 тонна (122 процент) аш-какай туса илнӗ.

Пӗтӗмпе 29558,7 тонна сӗт суса илнӗ (101,4 процент). Апла пулин те ял хуҫалӑх предприятийӗсенче те (7709,6 тонна – 96,6 процент), хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче те (179,1 тонна – 62,1 процент) сӗт сӑвассине чакарнӑ. Харпӑр хӑйсен хушма хуҫалӑхӗсенче кӑна 21670 тонна сӗт суса илсе пӗлтӗрхи ҫав вӑхӑтри кӑтартӑва 3,7 процент ӳсӗмлетнӗ.

Кашни ӗне пуҫне вӑтамран сӗт сӑвасси 2574 килогрампа танлашнӑ е 106,4 процент. Ял хуҫалӑх предприятийӗсенче вара пӗр ӗне пуҫне вӑтамран 2334 килограмм (97,9 процент) сӗт сунӑ.

Чӑхсенчен ҫӑмарта пӗтӗмпе 33902,7 илнӗ е 99,8 процент. Ял хуҫалӑх предприятийӗсенче ку кӑтарту ӳснӗ, 27987,8 пинпе танлашнӑ (107,3 процент), хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче – 4,5 пинпе (115,4 процент), харпӑр хӑйсен хушма хуҫалӑхӗсенче вара – 5910,4 пинпе.

Кашни чӑхран вӑтамран 185 ҫӑмарта илнӗ. Иртнӗ ҫулхи кӑтарту та ҫавӑн пекех. Самӑртма хупнӑ мӑйракаллӑ шултра выльӑхсем талӑкра вӑтамран 563 грамм (иртнӗ ҫул 494 грамм), сыснасем 320 грамм (342 грамм) ӳт хушнӑ.

Пӑрусем илесси те, ҫурасем илесси те районта чакнӑ. Пӑрусем 1825 (83,3 процент), ҫурасем 13705 пуҫ (75,6 процент) илнӗ.

Усӑ куракан кашни 100 гектар ҫӗр пуҫне аш-какай 51,2 центнер (104,1 процент), вӑл шутран ял хуҫалӑх предприятийӗсенче 37 центнер (112,8 процент), сӗт 469,2 центнер (101,4 процент), вӑл шутран ял хуҫалӑх предприятийӗсенче 175,1 центнер (97,2 процент) туса илнӗ.

Пӗтӗмӗшле районӗпе пур йышши выльӑх-чӗрлӗх йышӗ те унччен хи тапхӑртинчен чакнӑ. Ҫак вӑхӑта мӑйракаллӑ шултра выльӑхсем 20444 пуҫ (87,3 процент), вӑл шутран ял хуҫалӑх предприятийӗсенче 7593 пуҫ (83 процент), ӗнесем 11485 пуҫ (95,3 процент), вӑл шутран ял хуҫалӑх предприятийӗсенче 3157 пуҫ (92,1 процент), сыснасем 25092 пуҫ (99,3 процент), вӑл шутран ял хуҫалӑх предприятийӗсенче 14963 пуҫ (90,6 процент), сурӑхсемпе качакасем 10762 пуҫ (90,8 процент), вӑл шутран ял хуҫалӑх предприятийӗсенче 272 пуҫ (90,1 процент), чӑх-чӗп 273,6 пин пуҫ (95,7 процент), вӑл шутран ял хуҫалӑх предприятийӗсенче 201,8 пин пуҫ (92,7 процент), лашасем 446 пуҫ (80,9 процент), вӑл шутран ял хуҫалӑх предприятийӗсенче 446 пуҫ (74,8 процент) шутланаҫҫӗ.

Халӑхран сӗт пухассипе япӑх мар ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Августӑн 1-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпе 2553 тонна сӗт сутӑн илнӗ. Ку вӑл унччен хи ҫав вӑхӑтрипе танлаштарсан 140 процент пулать. Муркаш райповӗпе ку кӑтарту 873 тоннӑпа (173,9 процент), Мӑн Сӗнтӗр райповӗпе 600 тоннӑпа (124,7 процент) танлашать. Предпринимательсемпе заводсем 1080 тонна (129,3 процент) сӗт сутӑн илнӗ.

Аш-какай 602,7 тонна сутӑн илнӗ (114,5 процент). Вӑл шутран Муркаш райповӗ 35,4 тонна (150,6 процент), Мӑн Сӗнтӗр райповӗ 43,3 тонна (83,3 процент), предпринимательсемпе заводсем 524 тонна (116,2 процент).

Строительствӑра 187121 пин тенкӗлӗх (135,6 процент) инвестицисемпе усӑ курнӑ. Вӑл шутран харпӑр хӑйсен ҫурчӗсене тума 131220 пин тенкӗлӗх (130,7 процент). 162848 пин тенкӗлӗх (119,2 процент) ҫурт-йӗр хута янӑ. Вӑл шутран харпӑр хӑйсен ҫурт-йӗрне 131220 пин тенкӗлӗх 130,7 процент).

3,53 километр (2,62 километр) автоҫулсем ӗҫе кӗртнӗ, вӑл шутран 1,04 километр (2,62 километр) ҫӗнӗрен сарнӑ, юсав шучӗпе 2,49 километр ҫул тунӑ.

Харпӑр хӑйсен пурӑнмалли ҫурчӗсене 12150 тӑваткал метр чухлӗ (121 процент) хута янӑ.

Ҫак вӑхӑта ӗҫе тивӗҫтерен центрта 57 ҫын учетра тӑрать. Ку вӑл пӗлтӗрхи ҫав вӑхӑтринчен 10 ҫын нумайрах. Ӗҫсӗрлӗх шайӗ 0,27 процент.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийӗн экономика пайӗн пуҫлӑхӗ.**

## Асамлӑ тӑвар

Терка витӗр кӑларнӑ лимон хуппине тӑвар сапсан нумайлӑха упранать.

Сухан, ыхра каснӑ, пулӑ тытнӑ хыҫҫӑн алӑсене ырӑ мар шӑршӑ ҫапать. Унран хӑпма алӑсене тӑварпа сӑтӑрӑр та ҫӑвӑр.

Ҫӑкӑр сунтӑхне кӑштах тӑвар сапсан ҫӑкӑр часах хытмасть.

Сӗте кӑштах тӑвар хушсан вӑл йӳҫӗхмест.

Тӑварлӑ шывра ислетнӗ тӗслӗ пусмана ҫусан ҫӗнӗ пекех курӑнӗ.

Апат-ҫимӗҫ ҫуннӑ кастрюле тӑвар шывӗ ярса лартса вӗретсен ҫӑмӑллӑнах тасалӗ.

## Ялти сӑнсем

# Картишӗнчи хирӗҫӳ

Чӗрчунсемпе тӗрлӗрен пӑтӑрмах пулса иртет. Айккинчен сӑнама вара вӗсене питӗ интереслӗ.

Пирӗн хуҫалӑхра чӑхсем пур, автанӗ те. Ҫак ҫул вара манӑн аппа татах ҫамрӑк шурӑ виҫӗ чӑх туянчӗ. Шӑпах ҫаксене пирӗн автан тус ытларах тимлӗх уйӑрать. Ку ҫеҫ те мар, вӑл кӗвӗҫнӗн те туйӑнать. Анчах пирӗн шурӑ чиперккесене пускил автанӗ те куҫ хывнӑ иккен. Нумаях та вӑхӑт иртмерӗ, икӗ автан тус хирӗҫнине асӑрхама пуҫларӑмӑр. Хӑш чухне ҫапӑҫу хыҫҫӑн уйрӑлкалатчӗҫ-ха, тепӗр чухне вара эпир хамӑр вӗсене уйӑратӑмӑр.

Паянхи кун тӗлне пускил автанӗ хӑюллансах ҫитрӗ пулас, картишнех вӗҫсе каҫрӗ. Унта, паллах, пирӗн автанпа чӑхсем ҫӳреҫҫӗ. Хамӑр картишӗнчи автан ҫухалсах каймарӗ, кӗҫех хӑйӗн чӑххисене сыхлама пикенчӗ. Эпир те алӑ усса пӑхса лармарӑмӑр, кӗҫех вӗсене уйӑрма пикентӗмӗр. Тус-юлташа инкекре пӑрахса хӑвармаҫҫӗ вӗт. Ҫакскерсем вара пире асӑрхамаҫҫӗ те тейӗн, ҫав-ҫавах ҫапӑҫаҫҫӗ. Эпӗ вӗсене аяккалла ывӑтатӑп. Вӗсемшӗн пурпӗрех, каллех малтанхи ӳкерчӗк куҫ умне тухать.

Юлашкинчен уйӑртӑмах, пускиле хӑваласа ятӑм. Кил хуҫи – автан тус, хӑйӗн чӑххисем патне таврӑнчӗ. Пускил вара витресем патне ыткӑнчӗ, картишне урлӑ каҫма пикенчӗ. Анчах витресен кӗмсӗр-кӗмсӗр сасси янӑрарӗ, ҫунатлӑ тус вара кӑшт кӑна шыв хатӗрне чӑмаймарӗ. Манӑн мӑшӑр ӑна пулӑшма пикенчӗ, алӑка ириех уҫрӗ. Ҫакскер урама сасчӗвпе тултарчӗ. Ҫапла майпа хирӗҫӗвӗн парӑнма тиврӗ. Вӑхӑт нумаях та иртмӗ, кӗҫех шурӑ чӑхсем патне пускил автанӗ ҫул хывӗ тесе шутлатӑп эпӗ. Ҫавӑн пек пирӗн автансемпе чӑхсем.

# Епле савӑк чӗрчунсем

Халӗ ӗнтӗ чылайӑшӗ бизнеспа аппаланаҫҫӗ. Пирӗн ял “бизнесменӗ” те хуларинчен пӗрре те кая мар. Вӑл машинӑсем юсамалли пӳлӗм уҫнӑ. Анчах та юсав ӗҫне ыйтакан “хурҫӑ утсем” тӑтӑшах уҫӑ тӳпе айӗнче лараҫҫӗ. Ҫавӑнтах вара качакасемпе вӗсен путеккисем ирӗккӗн ҫӳреҫҫӗ. Акӑ эпир пӗррехинче урам илемӗпе, качакасен вӑййипе киленме тухрӑмӑр. Пӗлетӗр ӗнтӗ, ҫак чӗрчунсем питӗ выляма тата ҫӳллӗ вырӑнсене улӑхма кӑмӑлласҫӗ. Ку хутӗнче вара вӗсем ҫӳллӗ вырӑна, юсав ӗҫне кӗтекен машинӑна суйласа илчӗҫ. «Хурҫӑ утӑн» хуҫи аяккарах пӑрӑннӑ е вӑл унта пачах ҫук. Ҫавӑнпа та тӑватӑ уралӑскерсем хуҫи ҫуккипе усӑ курса ашкӑнма, хӑйсен таштипе киленме шутланӑ пулас. Ҫапла майпа вӗсем бампер урлӑ сике-сике каҫаҫҫӗ, капот, кабина тата багажник ҫинче тӑватӑпилӗк качака ҫӑмӑллӑнах хӑйсен ташшипе савӑнаҫҫӗ. Ку ҫеҫ те мар, ытти ӗҫне те ҫакӑнтах тӑваҫҫӗ. Иртен-ҫӳрен ҫынсемшӗн вара ҫакӑ питӗ тӗлӗнмелле те интереслӗ курӑнчӗ. Ку йышши концерта ӑҫта курӑн-ха тата. Ҫакӑн пек илӗртӳ циркра та пулаймӗ. Ҫак тӗллев валли ятарласа ӑҫтан-ха ҫавӑн чухлӗ качака путекки тата ют ҫӗршыв машини кӳрсе килӗн.

Вӑт ҫавӑн пек хӑюллӑ чӗрчунсем пурӑнаҫҫӗ пирӗн патра. Анчах та, питӗ шел, фотоаппарат ҫумра пулмарӗ, ӳркенмесӗрех ӳкернӗ пулӑттӑм. Вӗсем “Комсомольская правда” хаҫатри “Окно в природу” кӑларӑм валли питӗ вырӑнлӑ пулнӑ пулӗччӗҫ.

Ҫапах та иртсе пыракан пӗр арҫын “Ҫакӑ хӑйне май питӗ символлӑ”, – терӗ. Ҫакӑнпа вӑл мӗн каласшӑн пулчӗ-ши?

**В. МАСТЕРОВ.**

## Тӗл пулу

# 30 ҫул иртрӗ унтанпа

Август уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче 30 ҫул каялла Мӑн Сӗнтӗр шкулӗнчен вӗренсе тухнисен тӗл пулӑвӗ иртрӗ. Эпӗ вӗсен класс ертӳҫи пулнӑччӗ. Ҫавна май тӗл пулу каҫне мана та йыхравларӗҫ. Хаваспах килӗшрӗм. Ара, епле-ха чӑтса тӑрӑн. Вӗсенчен чылайӑшне вуншар ҫул хушши курман вӗт-ха. Халӗ вӗсен кашнийӗн хӑйӗн ҫемйи, ачи-пӑчи, хӑйсен пурнӑҫӗ. Иртнӗ вӑхӑтсене, шкулти кунсене пӗрле аса илме епле хавас.

1977 ҫулта шкултан вӗренсе тухнисен тӗл пулу каҫӗ Сӗнтӗрти кафере иртрӗ. Вӗсем хӑйсен мӑшӑрӗсемпе килнӗ. Аса илмелли, каласа памалли вара пурин те сахал мар пулчӗ.

Ҫав ҫул шкул пӗтернисенчен чылайӑшӗ хӑй суйласа илнӗ юратнӑ профессипе тӑрӑшса ӗҫлет. Хастар ӗҫпе ырӑ ята тивӗҫнисем те вӗсем хушшинче сахал мар.

Акӑ Юлия Петрова Мӑн Сӗнтӗрти ҫыхӑну уйрӑмӗнче тӑрӑшать. Мӑшӑрӗпе вӗсем 3 ача ӳстереҫҫӗ. Халӑх умӗнче вӑл яланах хисепре. Галина Игнатьева «Моргаушская» чӑх-чӗп фабрикинче тӑрӑшать. Ҫемьере 5 ача. Алевтина Кузьмина выльӑх тухтӑрӗн ҫемйинче вара ачасем 3, пурте тӑрӑшуллӑ та ӗҫчен. Галина Каргина куҫ курманнисен обществинче, Раиса Бархаткина больницӑра, Вениамин Буронов пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх предприятийӗнче тӑрӑшаҫҫӗ. Шупашкартан Владимир Квасов килсе ҫитрӗ. Пысӑк вырӑнта тӑрӑшать вӑл.

Тӗлӗнмелле ҫав. Питӗ хӑвӑрт иртет вӑхӑт. Ҫавӑн чухнехи кунсем куҫ умӗнчех пек. Сисмерӗмӗр те, 30 ҫул иртсе те кайрӗ унтанпа. Хӑшне-пӗрне палласа илме те ҫук. Пурне те манӑн вӗсене вӑрӑм ӗмӗр, ырлӑх-сывлӑх, телей, ӗҫӗсенче ӑнӑҫусем сунас килет. Кафере ӗҫлекен икӗ Вальӑна та пире тутлӑ апат-ҫимӗҫпе сӑйланӑшӑн пысӑк тав сӑмахӗ калатӑп. Яланах ӗҫӗсем ӑнса пыччӑр вӗсен.

**Е. НИКОЛАЕВА.**
**Мӑн Сӗнтӗр ялӗ.**